Çĕнтеруӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

15-16 (7440-7441) №№ ✻ Кĕçнерни кун, 2007 çулхи февралĕн (нарăс) 22-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ыран – Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунĕ

Раççей çарĕпе флочĕн хисеплĕ салтакĕсем, запаспи рядовойсемпе офицерсем, Аслă Отечественнăй вăрçă тата çар вăййĕсен ветеранĕсем!

Сире Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Авалтанпах пирĕн çĕршывра вăрçăри хастар ĕç пысăк хисепе тата пысăк сума тивĕç. Ку вăл хăюлăх, паттăрлăх, çĕршыва чунтан юратнин уявĕ.

Хĕç-пăшаллă вăйсем яланах Тăван çĕршыва, унăн никама пăхăнманлăхĕпе çынсен хăрушăрлăхне хӳтĕлес ĕçре. Пысăк çĕнтерӳсен летописĕнче çырăнса юлнă паттăрлăх тĕслĕхĕсенче чăваш çĕрĕ çинче çуралса ӳснисем те пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем хăйсен вăйне, пурнăçне шеллемесĕр Тăван çĕршыва хӳтĕленĕ. Çĕршыва хӳтĕлесе пуç хунисен ячĕсем яланах пирĕн асра.

Хальхи çамрăк ăру хăйсен ашшĕсемпе аслашшĕсен ырă йăли-йĕркине малалла тăсать, çар тивĕçне чыслăн пурнăçлать. Çамрăксене патриотла воспитани парассипе пысăк тӳпе хывакан пирĕн ветерансене чĕререн тав сăмахĕ калатăп.

Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисене пурне те çирĕп сывлăх, хавас кăмăл, çитĕнӳсем, телей те ăнăçу сунатăп!

Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. ФЕДОРОВ.

Хаклă ентешсем, Аслă Отечественнăй вăрçăн хисеплĕ ветеранĕсем, воин-интернационалистсем, çар çыннисем, вăрçăн йывăр çулĕсене чăтса ирттернĕ тыл ĕçченĕсем, çара кайма хатĕрленекенсем!

Сире пурне те пысăк уяв – Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Çĕршыва хӳтĕлесси кашни çыншăнах яланах чыслă та сăваплă тивĕç шутланнă. Ку вăл паян та çаплах, мĕншĕн тесен çĕршыв хăйĕн хӳтĕлевçисемпе тĕреклĕ. Пирĕн Тăван çĕршывăмăрăн Хĕç-пăшаллă Вăйĕсен историйĕ вара мухтавлă страницăсемпе пуян. Граждан вăрçи вăхăтĕнче те пирĕн çарсем паттăрлăх кăтартнă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнсе илнĕ Çĕнтерӳшĕн эпир ветерансемпе тыл ĕçченĕсем умĕнче ĕмĕр татайми парăмра. Афган вăрçинче те, ытти "вĕри" точкăсенче те пирĕн салтаксем çĕршыв умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçларĕç.

Тĕнчери лару-тăру паян та пире сыхă пулма хистет. Тăван çĕршыва хӳтĕлеме пирĕн яланах хатĕр пулмалла. Çĕршыв тĕрекĕ, хăвачĕ пирĕнтен кашниченех килет. Кашни çын хăйĕн ĕç вырăнĕнче чуна парса ĕçленипе, вĕреннипе эпир ăна татах та пуянлатса, тĕреклетсе пыратпăр.

Вăрçă ветеранĕсем, çарта пулнисем район пурнăçне хастар хутшăнаççĕ. Вĕсем çамрăк ăрушăн яланах ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ. Кăçал Ача çулталăкĕ пулнă май, çитĕнекен ăрăва воспитани парас ĕçре шăпах вĕсен паттăр утăмĕсене тĕпе хурăпăр. Паянхи салтаксем те, çĕршыв хӳтĕлевçисем пулма хатĕрленекенсем те аслашшĕсенчен, ашшĕсенчен, пиччĕшсенчен тĕслĕх илсе, вĕсем пекех маттур та паттăр пуласса шанас килет.

Çĕршыв хӳтĕлевçисене, салтак амăшĕсене маттур ывăлсем çитĕнтернĕшĕн тав тăватăп.

Пурне те çирĕп сывлăх, ĕçре ăнăçу, çемьере килĕшӳ, юрату сунатăп. Таса тӳпере яланах хĕвел йăл-йăл култăр, кайăксем юрлаччăр, мирлĕ ĕç шавĕ чуна çĕклетĕр, пурăнас, ĕçлес килсе тăтăр.

Район пуçлăхĕ Ю. А. ИВАНОВ.

ХИСЕПЛĔ ЮЛТАШСЕМ!

Районти çар комиссариачĕн командованийĕ ячĕпе Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсене, çар конфликчĕсене хутшăннисене, çар вăййĕсен ветеранĕсене, тыл ĕçченĕсене, районти мĕн пур çынсене Çар мухтавĕн кунĕ – Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп.

Раççей çĕршывĕн историйĕнче ку уйрăмах паллă уяв. Раççей çар традицийĕсенчен пĕрне çĕнетсе чĕртсе, февралĕн 23-мĕшне пирĕн халăх пĕтĕм патшалăх, пĕтĕм наци уявĕ тесе, халăх хăйĕн çар çыннисене сума сунине палăртса уявлать.

Районти салтаксем паян Раççей çарĕн ырă йăли-йĕркине танкодромсен вĕрентӳ вырăнĕсенче, стрельбищĕсенче, аэродромсенче, океансемпе тӳпе анлăшĕнче, мирлĕ вăхăтри çар подразделенийĕсенче малалла тăсаççĕ, вĕренӳпе çар задачисене тивĕçлипе пурнăçлаççĕ.

Февралĕн 23-мĕшĕнче эпир çĕршыва тата унăн ирĕклĕхне сыхласа пуç хунисене ырăпа аса илетпĕр.

Хисеплĕ ĕçпе вăрçă, çар вăййĕсен ветеранĕсем, воин-интернационалистсем, çар тивĕçĕсене пурнăçланă ветерансем. Çĕршыв хăватне çирĕплетессинче, çар авторитетне ӳстерессинче тата çар службин сумне хăпартассинче, çамрăксене çарпа патриотика воспитанийĕ парассинче сирĕн тӳпе пысăк. Раççей шăпишĕн ответлăх туйăмне ăнланса, çар формине тăхăннă çын çĕршывшăн, тăван халăхшăн тăрăшнă, халĕ те тăрăшать, çĕршыв хăвачĕпе унăн аталанăвĕшĕн вăй хурассинчен пĕлтерĕшлĕреххи уншăн нимĕн те çук. Салтак Тăван çĕршывшăн мĕн туни манăçмалла мар.

Хисеплĕ юлташсем, сире пурсăра та Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунĕ ячĕпе саламлатăп. Çирĕп сывлăх, телей тата ăнăçусем сунатăп.

А. МАЛИНИН,
районти çар комиссарĕ.

"Ачалăх ячĕпе, йăлтах ачалăхшăн" ыр кăмăллăх марафонĕ

Ачасене пулăшнăшăн çука юлмăпăр

Ачалăх кашни çыннăн пурнăçĕнче тĕп вырăн йышăнать. Ачалăхран пуçланать пурнăç. Телейлĕ-и вăл е телейсĕр– ăна автобиографирен чĕрсе пăрахаймастăн. Кун-çул иртнĕçемĕн чĕре ăна аса илсен хĕпĕртесе тапать-и е хĕсĕнсе ыратать – çакă вара çитĕннисенчен нумай килет. Ачалăхра йывăр чухне пĕр хутчен пулăшу парса алă тăсни те пĕтĕм пурнăç çулне улăштарма пултарать ачасенне. Çав хушăрах кĕтсе илеймен ăшă сăмах, тимлĕх шăпана тепĕр майлă çавăрса хума пултарать. Паян вара кашни çитĕннĕ çын ачасене - хăвăрăн-и вăл, кӳршĕ ачи-и е çĕр çинчи чи сывăх çынсемсĕр тăрса юлнă ют ача – май килнĕ таран пулăшма пултаратпăр. Пултаратпăр çеç-и? Çапла тумалла та пирĕн. Çакна шута илсе, республикăра "Ачалăх ячĕпе, йăлтах ачалăхшăн" ыр кăмăллăх марафонĕ иртет. Пирĕн районта ку тĕлĕшпе мĕнле ĕçсем туса иртнине палăртнă? Çакăн пирки каласа пама ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçинчен Н. П. ПЕТРОВАРАН:

–"Ачалăх ячĕпе, йăлтах ачалăхшăн" ыр кăмăллăх марафонне ирттересси çинчен район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов кăçалхи февралĕн 17-мĕшĕнче 59-мĕш номерлĕ ятарлă Йышăну кăларчĕ. Унпа килĕшӳллĕн февралĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 19-мĕшĕччен районта "Ачалăх ячĕпе, йăлтах ачалăхшăн" ыр кăмăллăх марафонĕ иртет. Унпа сыхăннă мероприятисене ирттерес тĕллевпе районта 13 çынран тăракан йĕркелӳ комитетне çирĕплетнĕ. Ăна район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов ертсе пырать.

– Нина Пантелеевна, камсем тата мĕнле пулăшу парасси çинче чарăнса тăни вырăнлă пулĕ.

– Чи малтанах районти кашни предприятипе организацие, учреждение, çавăн пекех предпринимательсене, районта пурăнакан кашни çынна çак ыр кăмăллăх марафонне хутшăнма чĕнсе каласшăн. Пăхăр-ха йĕри-тавралла. Мĕн чухлĕ ача паян ашшĕ-амăшĕсĕр юлнă? Миçе çемьере арçын ачасемпе хĕрачасем телейлĕ ачалăх мĕн иккенне пĕлеймеççĕ? Мĕн чухлĕ инвалид-ача тимлĕх ыйтать? Хамăрăн проблемăсем айне пулса çав айăпсăр чунсем пирки манас марччĕ. Вĕсене пулăшнăшăн сăвап пулĕччĕ.

Пулăшма вара кирек епле те юрать. Ача тумтирĕ-и, апатçимĕç-и, кĕнеке-тетрадь-и – йăлтах пама юрать. Ачасем валли хатĕрленĕ япаласене социаллă хӳтлĕх пайĕнче те, ял тăрăхĕсен администрацийĕсенче те йышăнаççĕ. Укçан пулăшас текенсем валли районта ятарлă счет уçма палăртнă. Укçана çак адреспа куçармалла:

Отдел образования, молодежной политики, физической культуры и спорта администрации Моргаушского района
ИНН 2112001302
КПП 211201001
лицевой счет 06974120035 в отделе Минфина Чувашии по Моргаушскому району
расчетный счет 40603810800001000063
КБ "Юбъединенный банк Республики" (ООО) г. Чебоксары
БИК 049706749
Корреспондирующий счет 30101810600000000749
КБК 974 30302050050000180

–Марафон пуçланчĕ ĕнтĕ. "Çăмăл алăлли" кам пулчĕши?

– Социаллă хӳтлĕх пайне чи пĕрремĕш япаласем илсе килекенĕ Муркашра пурăнакан А. А. Чернова пулчĕ. Вăл усă курнă ача япаласем илсе килчĕ. Хăйĕн ачисем ӳссе çитĕннĕ, халĕ çав хатĕрсем тепĕр ачасене савăнăç парĕç.

Ертӳçĕсемпе кашни уйрăм çын вăхăта сая ямасăр ыр кăмăллăх марафонне хутшăнасса шанас килет. Марафона вара вăл вĕçленсен уяв йĕркелесе пĕтĕмлетме палăртатпăр. Унта пулăшу паракансемпе çав пулăшу кирлĕ ачасене, çемьесене чĕнетпĕр.

Сăмаха вĕçленĕ май вара çакна çеç калас килет. Пĕрпĕрне пулăшма ан ӳркенĕр. Ырă ĕç ырăпах тăрăнать.

-Тавах, Нина Пантелеевна, калаçушăн.

Л. ПАВЛОВА калаçнă.

Налук ыйтăвĕсемпе

Кăтартусем унченхинчен пысăкрах

2006 çулта районăн бюджетне тата бюджетлă мар фондсене 153929 пин тенкĕ пырса кĕнĕ. Ку вăл, 2005 çулхипе танлаштарсан, 116,5 процент пулать. Укçа-тенкĕ федераллă бюджета 10648 пин тенкĕ, республика бюджетне 46238 пин тенкĕ, вырăнти бюджета 26949 пин тенкĕ, бюджетлă мар фондсене 70094 пин тенкĕ пухăннă.

Вырăнти бюджета пухăнакан укçа-тенкĕ шутĕнче уйрăм çынсенчен илекен налук шайĕ пысăкрах вырăн йышăнать. Вăл иртнĕ çул 17301 пин тенкĕпе (64,2 процент) танлашнă, çĕр налукĕ 1513 пин тенкĕпе (5,6 процент), пĕрлехи налук 6648 пин тенкĕпе (24,7 процент).

Налук пухассипе парăмсем чакса пыраççĕ. Унччен вăл 1766 пин тенкĕпе танлашнă пулсан, иртнĕ çул 1549 пин тенкĕне юлнă. Çав шутран вырăнти налуксем енĕпе 169 пин тенкĕлĕх чакнă, 365 пин тенкĕ чухлĕ юлнă.

Хăш-пĕр предприятисемпе организацисем налуксем, пенси страхованийĕн взносĕсене тӳлессипе пысăк парăмçăсем шутланаççĕ. Кунта чи малтанах «Спецмонтажгазăн 3-мĕш номерлĕ тресчĕ» хупă акционер обществине, «Хмель» компани» хупă акционер обществин Муркашри филиалне, «Моргаушагропромснаб» тата «Пельмени» кафе» муниципаллă унитарлă предприятисене, «Агроинвестсервис», «Агроном», «Дубрава», «Золотая пирамида» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсене, «Муркашри сĕтçу завочĕ» уçă акционер обществине, «Хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ» хупă акционер обществине, «Динамо», К. Иванов яч. хис. хуçалăхсене асăнмалла.

Çавăн пирки уйрăммăн каласа хăварас килет. Пĕрлехи социаллă налука, страховани взносĕсене вăхăтра тӳлесе тăнин пĕлтерĕшĕ пысăк. Мĕншĕн тесен вĕсем тĕллевлĕ шутланаççĕ, пенсипе тивĕçтерме, çынсен социаллă тата медицина ыйтăвĕсене татса пама каяççĕ. Çавăнпа та налуксем тӳлессипе парăмсем ан пулччăр тесе тăрăшмалла.

И. ШАРОНОВА,
РФ федераллă налук службин Чăваш Республикинчи районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕн парăмсене тишкерес тата йĕркелес енĕпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ.

Ĕнер Информаци кунĕ пулчĕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРЕЗИДЕНЧĔ Н.В.ФЕДОРОВ ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛĂХ КАНАШНЕ ЯНĂ ÇЫРУ

«ВĂХĂТА ХАКЛАМАЛЛА, ÇЫНСЕМШĔН ĔÇЛЕМЕЛЛЕ»

Ĕнер районта, мĕн пур республикăри пекех, Информаци кунĕ иртрĕ. Ĕç коллективĕсенче пулма, çынсемпе тĕл пулса калаçма Чăваш Республикин патшалăх ветеринари службин пуçлăхĕ В.К. Тихонов, республика вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министрĕн сумĕ М.Ю. Толстов, РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн управляющийĕн сумĕ А.П. Иванов, Раççей Юстици министерствин суд экспертизин Чăваш Республикинчи учрежденийĕн пуçлăхĕ Л.П. Морозов килнĕ. Ответлă ĕçченсем ушкăнсем çине пайланса Ильинка, Катькас, Хорнуй ял тăрăхĕсенче, Шурча, Калайкасси, Шатракасси, Тойкилтĕ шкулĕсенче, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче, Ленин яч. хис. хуçалăхра пулнă, ĕç коллективĕсемпе тĕл пулнă, граждансен ыйтăвĕсене хуравланă.

Информаци ушкăнĕсем ЧР Президенчĕ Патшалăх Канашне янă Çырупа тата 80 № Указпа паллаштарчĕç.

Паянхи хаçат номерĕн 3-5 страницисенче çак Çырăва пичетлетпĕр. Çапла кашни вулаканах ăна тĕплĕн тишкерсе тухма пултарĕ.

Хăвăр шухăш-кăмăлăра редакцие пĕлтерсен аван пулмалла.

Йыхрав

Район кунне халалласа

Район кунне халлланă уява кăçал Шупашкарта К. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш академи драма театрĕнче мартăн 2-мĕшĕнче ирттерме палăртнă. Кун пирки район администрацийĕн пуçлăхĕ 2007 çулхи февралĕн 14-мĕшĕнче 55 № ятарлă хушу кăларнă.

Уява хатĕрленсе ирттерме йĕркелӳ комитечĕ туса хунă. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ертсе пырать.

Кунпа пĕрлех район кунне халлланă уява хатĕрленсе ирттерессипе пурнăçламалли ĕçсене те палăртнă.

Йышăну

"Ачалăх ячĕпе, йăлтах ачалăхшăн" ыр кăмăллăх марафонне ирттересси çинчен

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов февралĕн 17-мĕшĕнче çак ятпа 59 № йышăну кăларнă.

Нушаллă пурăнакан ачасен пурнăç условийĕсене лайăхлатассипе ĕçлекен тĕллевлĕ программăсен тата Чăваш Республикинче иртекен "Ачалăх ячĕпе, йăлтах ачалăхшăн" ыр кăмăллăх марафонĕ виçинче пирĕн районта февралĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 19-мĕшĕччен çакăн йышши марафон йĕркелемелле.

Марафона ирттерме ятарлă йĕркелӳ комитечĕ çирĕплетнĕ. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. А. Иванов ертсе пырать.

Юбилей

Саламлатпăр

Хаклăран та хаклă çыннăмăрсене, аттепе аннене, асаттепе асаннене, кукамипе кукаçине – Йӳтĕркасси ялĕнче пурăнакан **Геннадий Константинович БЕЛОВА** 60 çул тултарнă ятпа тата юратнă аннене **Мария Георгиевна БЕЛОВАНА** 55 çул тултарнă ятпа пĕтĕм чун-чĕререн саламлатпăр.

Юратнă çыннăмăрсем, тавах сире пуриншĕн те, нумай çулсем пурăнăр, нихăçан та ан чирлĕр. Ачусемпе мăнукусем сире яланах савăнăç кăтартчăр, яланах вĕсем сирĕн пата пырса çӳреччĕр. Çĕре çити пуç таятпăр эпир сирĕн умăрта.

Саламлаканĕсем: хĕрĕпе кĕрĕвĕ, тăватă ывăлĕпе икĕ кинĕ, сакăр мăнукĕ.



Хаклăран та хаклă çыннăмăрсене, аттепе аннене, асаттепе асаннене – Шарпаш ялĕнче пурăнакан **Виталий Петровичпа Нина Митрофановна МАРКОВСĔНЕ** февралĕн 26-мĕшĕнче çемье çавăрнăранпа 25 çул çитнĕ ятпа – кĕмĕл туйпа чун-чĕререн саламлатпăр.

Аслă Турă сире çирĕп сывлăх, нумай çул татах пĕрле пурăнма телей патăр, ачусемпе мăнукусем ырлăх-савăнăç кӳччĕр, телейĕр хăвăртан малта пытăр. Тавах сире эсир пуришĕн, тавах сире пуриншĕн те.

Саламлаканĕсем: ывăлĕпе хĕрĕсем, кинĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем.

Платкасси ялĕнче пурăнакан юратнă мăшăра, ырă кăмăллă асаннене, хаклă çыннăмăра – **Людмила Викторовна МИХАЙЛОВАНА** 50 çулхи юбилейĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Вăрăм кун-çул, тулли телей, çирĕп сывлăх сунатпăр. Сĕтелӳ çăкăр-тăвартан, кĕрекӳ тăвансенчен, тус-юлташсенчен ан татăлтăр. Ачусен, мăнукусен ырлăхне курса савăнмалла пултăр. Анне, эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр.

Салампа мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем.